Сиплевçĕ

Усал шыçăран

200 грамм кушак курăкĕн /валериана/ тымарне /вĕтетсе/ аçтăрхан майăрĕ ăшĕнчи çиме юрăхсăр пайĕсемпе /перегородка/, çур стакан хурăн кăчкипе, 2 чей кашăкĕ вĕтернĕ мускат майăрĕпе хутăштармалла. Хутăша çур литр спирта /е шур эрехе/ ямалла, кĕленче савăта 15 куна тĕттĕм вырăна лартмалла. Сăрăхтармалла, кунне апатчен 6 хут 1-ер десерт кашăкĕ ĕçмелле.

Усал шыçă аталаннă вăхăтра чечек тусанне /пыльца/ çини усăллă. 1 килограмм пыла 200 грамм çак паха чĕр таварпа хутăштармалла, кунне 4-5 хут апатчен 1-ер апат кашăкĕ çимелле.

Усăллă канашсем

● Медицина ĕçченĕсем сунасран сăмсана эмелсем янă вăхăтра эрех-сăра ĕçме юраманни çинчен асăрхаттараççĕ. Сăмсана юн тымарне пĕрекен тумлам тумлатăр, ун хыççăн туссемпе сăра ĕçрĕр – кăштахранах пуç ыратма пуçлĕ. Алкоголе çакнашкал эмелсемпе хутăштарни юн пусăмне ÿстерет, гипертони патне те илсе çитерет.

● Кашни виççĕмĕш инсульт тĕпрен илсен юн пусăмĕ час-часах ÿснипе пулать. Çавăн пекех самăрланни, сахал хускану туни, сигарет туртни, тĕрĕс мар апатланни, сахăр диабечĕ, эрех-сăра, кăмăл пусăрăнни те çак инкек патне илсе пыраççĕ.

● Организма кăштах çеç шыв çитмесен те пуç мими калăпăшĕ пĕчĕкленет, ĕçлес пултарулăх чакать. Шкул ачисен, студентсен, ăс-тăн вăйĕпе ĕçлекенсен кашни кунах шыв çителĕклĕ ĕçмелле.

● Пилеш çырлинче витамин питĕ нумай. Ăна вĕтетмелле, кастрюле çурри таран хумалла, вĕренĕ шыв ямалла. Кастрюле 15 минутлăха духовкăна лартмалла /вĕретмелле мар!/ Сăрăхтармалла, чей вырăнне ĕçмелле.

Ÿте тасатма пĕвере «пăхмалла»

Пĕверсĕн сиплев дюбажĕ питех те лайăх. Ăна ÿсен-тăран çăвĕпе, тăвар ирĕлчĕкĕпе, вата кăларма пулăшакан курăксен пуххипе, минерал шывĕпе, сорбитпа е ксилитпа тăваççĕ.

Сорбитпа сипленмелли меле илсе кăтартар-ха. 1 апат кашăкĕ сорбита çур стакан шыва ямалла, çĕрле ĕçмелле. Выртмалла, пĕвер çине грелка хумалла. Пĕр эрне çапла сипленмелле. Çакăн усси кăштах вăхăтранах курăнĕ, ÿт хаклă йышши крем сĕрмесĕрех тасалать.

Халăх усă куракан ытти рецепт та витĕмлĕ. Çуршар стакан йÿçĕтнĕ купăста шывне, помидор сĕткенне хутăштармалла. Апат хыççăн кунне 3 хут ĕçмелле. Çапла 5 уйăх сипленмелле. Организма тасатмалли дюбажсемпе усă курни ÿт çине тухнă чĕкеç шатринчен хăтăлма та пулăшать.

● *Пĕлме интереслĕ*

Шăла мĕн аркатать?

Британири стоматологсем шăла аркатакан сиенлĕ япаласене палăртнă. Кусем – цитрус çимĕçĕсем, шурă эрех /белое вино/. Вĕсенче шăл эмальне сиен кÿрекен йÿçек нумай. Час-часах çыртакалани те шăлшăн усăллă теейĕмĕн. Антидепрессантсем тата ыратнине ирттерекен хăшпĕр эмел çăварăн лăймака сиппе типĕтеççĕ. Вĕсем те шăл эмалĕшĕн сиенлĕ, мĕншĕн тесен сурчăк – шăлăн тĕп хÿтĕлевçи. Вăл çитмесен шăл арканать. Юлашкинчен, шăлшăн чи сиенли – ăна шуратни.

● *Ансат мелпе*

Ыхра юна шĕвĕтет

Хăшĕсен юн питех те çăра, çакă ăна юн тымарĕсем тăрăх кирлĕ пек «чупма» чăрмантарать. Кунта пире ыхра пулăшать. 3 шăл ыхра, 1-ер апат кашăкĕ хĕрлĕ эрех /красное вино/, уксус тата олива çăвĕ илмелле. Çаксене блендерта хутăштармалла. Виçĕ сехетрен хутăшăн пĕрре виççĕмĕш пайне 1 стакан вĕри шыва ярса ĕçмелле. Юлнă 2 пая кашни 6 сехетрен пĕрер пай ĕçмелле.

Аденоидсенчен – ÿсен-тăран çăвĕсем

● **Сырлан /облепиха/ çăвне** сăмса шăтăкне çуршар пипетка кунне 3 хут тумлатмалла. 2 эрне сипленмелле.

● **Кедр майăрĕн çăвĕ** – кунне 3 хут тумлатмалла. 2 эрне сипленмелле.

Кирек мĕнле çăва тумлатас умĕн те сăмсана кăштах тăвар хушнă шывпа /1 чей кашăкĕ тăвара вĕренĕ 1 стакан ăшă шыва ямалла/ «сумалла»: шĕвеке сăмсапа туртса илмелле те сурса тăкмалла. Нафтизин тумлатмалла. 15 минутранах çу тумлатма юрать.

● *Тутлă та, усăллă та*

«Утиял айĕнчи» пулă

Пысăках мар пулă /темиçе те юрать/, купăста çулçисем, 2 шăл ыхра, пуçлă сухан, пылак пăрăç 1 штук, çур лимон, ÿсен-тăран çăвĕ, укроп, тăвар, авăртнă хура пăрăç кирлĕ.

Вĕрекен шыва купăста çулçисене темиçе минутлăха ямалла. Лимон хуппине теркăпа хырмалла. Уйрăм савăта хумалла, сĕткене ямалла. Пулла тасатмалла, тăвар, пăрăç, вĕтетнĕ ыхра сапмалла. Вĕтетнĕ лимон хуппипе сĕткенне ямалла. Сухана – çавраşкасем туса, пылак пăрăça тăрăхла турамалла. Купăста çулçисене ÿсен-тăран çăвĕ сĕрмелле. Вĕсем çине сухан, пылак пăрăç, укроп, пулă хумалла, пулла купăста çулçипе чĕркесе противень çине вырнаçтармалла. Духовкăра çур сехете яхăн пĕçермелле.

Антонина ДОЛГОВА хатĕрленĕ.

● *Кăштах кулăш*

Ыйту

Лавкка умĕнче Лешкасри Марукпа Мунчакасри Тарук тĕл пулчĕç.

– Ĕçсем мĕнлерех, сывлăху еплерех? – ыйтрĕ Тарук юптарса.

– Санăн савăнас килет е хурланас шухăш пур?

– Ара, мĕншĕн апла ыйтатăн?

– Питĕ лайăх тесен – ăшăнта хурланатăн, япăх тесен – шутсăр савăнатăн. Çавăнпа ыйтрăм та ĕнтĕ.

А.ТАКАН.

● *Пултарулăх*

«Чунăм театрах туртăннă»

Республикăри театрсен аталанăвĕ Иван Ксенофонтов ячĕпе тачă çыхăннă. Вĕсенче 50 çул ытла вăй хунă Иван Ксенофонтович. Шупашкарти мĕн пур театрта директорта ĕçлеме тÿр килнĕ, икĕ хутчен филармони ертÿçинче. Пуринче те, вырăс театрĕсĕр пуçне, спектакльсенче вылянă. Унччен маларах куçса çÿрекен колхоз театрĕнче 11 çул артистра тăрăшнă.

Хисеплĕ çыннăмăр нумаях пулмасть 85 çул тултарчĕ. Çавна май вулакансене унăн кун-çулĕпе паллаштарас терĕмĕр. Унран вĕренмелли, тĕслĕх илмелли пайтах.

Театра юратасси Етĕрнери педучилищĕре вĕреннĕ чухне пуçланнă. Хулара вырнаçнă 3-мĕш колхоз театрĕн артисчĕсем пĕррехинче педучилищĕне «Садсем чечекленеççĕ» спектакле кăтартма пынă. Ун хыççăн Карп Карпыч рольне вылякан Михаил Уфимцевпа пырса калаçнă. Паллашнă. Марков художникпе те туслашнă. Ăна пулăшма театра час-часах çÿренĕ: афишăсем çырма, вĕсене стенасем çине çыпăçтарма.

Çав çулсенче пурте «Последний табор» кинофильма юратса пăхнă. Унти тĕп сăнара – Юдко чикан рольне – Етĕрнере çуралса ÿснĕ Николай Мордвинов артист калăпланă. Тĕлĕнсе каймалла чаплă вылянă.

Вăл педучилище вырнаçнă урамрах /Октябрь урамĕ/ çуралнă иккен. Пĕррехинче артист амăшĕ патне саслă çыру янă тенĕ хыпар сарăлнă. Пĕр ушкăн пухăнса амăшĕ патне артистăн тăван килне çав çырăва итлеме кайнă. Амăшĕ чÿречине уçса янă, чÿрече янаххи çине патефон вырнаçтарса лартнă. Патефон пластинки çине çыртарнă ывăлĕн сăмахĕсене каçса кайсах итленĕ.

Николай Мордвинов тĕслĕхĕ те артиста тухма хавхалантарнă Иван Ксенофонтова.

1947 çулхи утă уйăхĕнче Пĕрремĕш колхоз театрне артиста вырнаçнă. Чи малтанхи роль Александр Кăлканăн «Кÿршĕсем» камитĕнчи Мышкин сăнарĕ пулнă. Ăна çакăншăн питĕ мухтанă. Мышкин – колхоз счетовочĕ, çăмăлттайскер. Хăйне те ку роль питĕ килĕшнĕ, чунне парсах вылянă.

Çаврăнăçулăхпа çирĕп ăс-тăна пула темĕнле йывăр лару-тăрура та аптраса кайман. Саратоври опера студийĕнче, Мускаври театр институтĕнче вĕренни те самаях пулăшнă. Сцена фехтованийĕн чаплă ăсти Немировский патне те çÿренĕ: шпагăпа аванах сулкалашма хăнăхнă.

Испани драматургĕн Кальдеронăн «Юратупа шÿт тумаççĕ» пьесипе лартнă спектакльте çак ăсталăха туллин кăтартма пултарнă. Лайăх хатĕрленнĕ, репетицисенче алă хăмпăланиччен шпагăпа «çапăçнă». Спектакль вăхăтĕнче Дон Алонсо рольне вылякан Иван Ксенофонтовăн шпаги хуçăлнă. Мĕн тумалла? Хайлав тăрăх унăн çĕнтермелле-çке. Ăна иккĕн тапăннă, иккĕшĕ те шпагăпа. Кинжал пур-çке! Ăна туртса кăларнă, тăшмана пуçĕпех «пĕтернĕ».

1952 çулта ашшĕпе амăшĕ харăсах чирленĕ пирки тăван яла, Етĕрне районĕнчи Килтĕше, кайса пурăнма тивнĕ. Шкулта вырăс чĕлхипе литература учителĕнче ĕçлеме пуçланă. Пĕррехинче экзаменра лараканскер пĕрле ĕçленĕ артистсем кÿршĕ яла «Ксения» спектакль кăтартма килнине илтнĕ. Мĕнле чăтса тăрăн? Юлташсемпе курнăçма васканă, пьеса та курнă.

«Каçхине Римов директор киле пычĕ. Театра таврăнма ыйтрĕ.

Хамăн та чун театрах туртăннă. Утă уйăхĕн юлашки кунĕнче Сĕнтĕр районĕнчи Катькасси ялĕнче вырнаçнă куçса çÿрекен колхоз театрне персе те çитрĕм. Юлташсем сырса илчĕç, хамран ытларах та савăнчĕç пулĕ. Паян Ишлее «Ксения» спектакльпе каймалла-мĕн, анчах Сергей рольне вылякан Григорий Филиппов эпĕ киличчен кăшт маларах ĕçрен тухса Шупашкара куçса кайнă. Мана ун рольне йышăнма хушрĕç. Çапла Ишлее тухса кайрăмăр. Суфлер кирлĕ пулмарĕ, пĕрре те такăнмарăм. Кайран ку спектакле Самар облаçĕнчи, Тутар Республикинчи чăвашсем патĕнче 3 çул ытла вылярăмăр», – аса илет Иван Ксенофонтович.

● *Иван Ксенофонтов – К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕ. 1958 çул.*

Вырăс театрĕн директорĕнче ĕçленĕ чухне артистсене Тюмене гастроле илсе кайнă. Республика кунĕнче, çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче, унта Ухсай Яккăвĕн «Тутимĕр» трагедине выляма палăртса хунă. Çакăн çинчен радиопа та пĕлтернĕ.

Спектакль курма лăк тулли халăх пухăннă. Сцена çине Иван Ксенофонтов директор тухнă. Куракансене Чăваш Республикин кунĕ ячĕпе чăвашла саламланă. Тăван чĕлхешĕн тунсăхланă йăхташсем çакна илтсен çав тери хавхаланнă.

Искусство ĕçĕсен управленийĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ Василий Ржанов драматурга ырăпа аса илет. Иртнĕ ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсен вĕçĕнче «О журналах «Звезда» и «Ленинград» йышăну тухсан театрсем дотацисĕр юлнă. Раççейри нумай театр хупăннă. 1948 çул вĕçĕнче Василий Тимофеевич тăрăшнипе икĕ колхоз театрне туса хунă. Çавсем валли артистсене ятарласа йĕркеленĕ комисси суйласа илнĕ. Вĕсен йышне Иван Ксенофонтов та лекнĕ. Василий Тимофеевич Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз председателĕпе Иван Ефремовпа Катькасси ялĕнче пушă ларакан икĕ хутлă йывăç клубра çĕнĕ театрăн стационарĕ тума калаçса татăлнă.

Театрăн машина та, укçа та çук. Çĕнĕ вырăна мĕнле çитмелле? Мелне шыраса тупнă. Ялсенче спектакльсем кăтартса пуçтарнă укçапа çитнĕ Катькассине. Василий Тимофеевич кашни артиста ялти çынсем патĕнче хваттере вырнаçтарнă. Колхоз председателĕ вара çăкăр пĕçерме пурне те пĕрер пăт çăнăх валеççсе панă.

Театр ку вăхăтра та дотаци илмен. Республикăри куçса çÿрекен колхоз театрне дотаци парас ыйтăва татса пама Мускава миçе хут кайман-ши Василий Тимофеевич? Юлашкинчен çак ыйтупах К.Е.Ворошилов патне партин Тĕп Комитетне çитнĕ. Ун чухне Ворошилов искусствăпа культура ыйтăвĕсене те татса панă.

Куçса çÿрекен колхоз театрĕ ялта, колхозра вырнаçнине пĕлтерсен вăл тĕлĕнсех кайнă. «Мĕнле? Колхозри колхоз театрĕ. Тĕлĕнмелле. Çулсерен вĕсем валли 100 пин тенкĕ уйăрмалла!» – пулнă унăн сăмахĕ.

«Дотаци париччен 7-8 уйăх артистсем ĕç укçи илменччĕ. Сасартăк пуян пулса тăтăмăр. Эпĕ тÿрех К-125 мотоцикл туянтăм. Театрта мотоцикл манăн çеçчĕ. Хурçă утпа ялсенче спектакльсем йĕркелесе çÿреттĕм. Артистсем çывăрса тăриччен 4-5 ялта пьеса кăтартма килĕшсе татăлаттăм».

Театрсемпе халĕ те туслă вăл. Пĕр премьерăран та юлмасть. Театрсем хăйсем те манмаççĕ ăна, чĕнсех тăраççĕ. 85 çул тултарнă ятпа та хĕрÿллĕн саламларĕç.

■ **Галина ЕЛИВАНОВА, К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕн наука аслă ĕçченĕ**

● *Ас тăвăм*

Паттăрсен йĕрĕпе

Алăра – «Вăрçă. Паттăрсен йĕрĕпе» очерксен пуххи. Кĕнеке сакăр очеркран тăрать. Вĕсене чăвашла тата вырăсла пичетлесе кăларнă. Кĕнеке авторĕсем – «Хыпар» хаçатăн общество корреспонденчĕсем Григорий Скворцовпа унăн хĕрĕ Ирина Игнатьева. Чăваш Ен хисеплĕ тавра пĕлÿçи, педагогика ветеранĕ Г.К.Скворцов Вăрнар районĕнчи Мăньял Хапăсра пурăнать, И.К.Игнатьева Шупашкарти К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче ĕçлет. Çĕнĕ кĕнекине хатĕрленĕ чухне вĕсем нумай шыранă-тĕпченĕ, архивсенче ларнă.

Очерксен геройĕсем – пирĕн паттăр ентешсем. Вăрнар районĕнчи Хурапыр Юнтапара çуралнă Мухтав орденĕн тулли кавалерĕн А.А.Парминовăн кун-çулĕпе паллаштарнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вилнисен спискĕнче çур ĕмĕр шутланса тăнă Вăрнар поэчĕ П.М.Михайлов çинчен вулама та кăсăклă. Çарăклăра çуралса ÿснĕ пĕр тăван Всеволод, Леонид, Валентин, Георгий Зайцевсен шăпи те тĕлĕнмелле, вĕсем тăшмана хирĕç пĕр танк экипажĕнче çапăçнă. Авторсем пĕлтĕр 80 çулне паллă тунă райхаçатăн пĕрремĕш редакторĕ кам пулнине те шыраса тупнă. Вăл – И.Т.Комаров. Пултаруллă çак çын фронтран таврăнайман. Алексей Талвир Аркадий Гайдар писателĕн вил тăприне мĕнле шыраса тупнине çырса кăтартни те, ытти паттăр çинчен каласа пани те пур.

Кĕнекене авторсем ашшĕне тата аслашшĕне – 1942 çулта Севастополе фашистсенчен хÿтĕлесе пуç хунă К.С.Скворцова – халалланă.

■ **Алина ЛУКИЯНОВА**

● *Çĕнĕ кĕнеке*

«Чăн тÿпере çич çăлтăр»

Паллă тĕпчевçĕ, литература критикĕ, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Юрий Артемьев кăларнă çĕнĕ кĕнеке «Чăн тÿпере çич çăлтăр: Критикăллă статьясем» /Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви/ ятлă.

Кĕнеке ячĕ тата ун хуплашкинчи çичĕ сăн ÿкерчĕк сăмах унта кам пирки пыни çинчен систерет: Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Федор Павлов, Илле Тăхти, Петĕр Хусанкай, Хветĕр Уяр, Юрий Скворцов.

Вулакан çакăн пек ыйту та пама пултарĕ: «Мĕншĕн шăп та лăп çаксене кĕртнĕ кĕнеке авторĕ чăн тÿпери çăлтăрсен ушкăнне?» Ун пирки ум сăмахра Юрий Михайлович çапла пĕлтерни пур: «...Тăван чĕлхепе культурăмăрăн тÿпинче куçа шартармасăр, ынатлăн йăлйăл туса çутă сапалакан пысăках мар ушкăн çăлтăр пирки пырать сăмахăмăр. Ыттисенчен çÿлерех вырнаçнăн курăнаççĕ вĕсем манăн куçа: Тÿрĕлĕхшĕн çине тăма хăюлăх çитернипе, хăйсем пултарнă Илем тĕнчипе, Чун шалпарлăхĕпе...»

Кĕнеке çичĕ пайран /кашни не маларах асăннă çăлтăрсене халалланă/ тăрать. Константин Иванова халалланă «Нарспи пек ватăлми поэтăн сăн-сăпачĕ» ярăмра пилĕк статья – «Аслă Силпи ялĕнче», «Çут çанталăк килтерĕшлĕх», «Кама шыратăн, Сократ?», «Юратăвăн вилĕмсĕр хăвачĕ», «Пурнăç чăнлăхĕ е романтизм?» Вулаканăм асăрхарĕ пулĕ: çак ĕçсенчен пĕри – «Кама шыратăн, Сократ?» икĕ çул каялла пуçласа «Хыпарта» кун çути курнăччĕ.

«Чунпа шăранса юнпа çырнă сăвăсем» – кам пирки калама пулать çак йĕркесене? Паллах – Çеçпĕл Мишши кĕрешÿçĕ çинчен. Çĕнĕ пурнăçшăн, ирĕклĕхшĕн, тăван чĕлхе хурçăран вăйлăрах пулас шанăçа чунра тытса ĕçленĕ, кĕрешнĕ, çырнă вăл.

«Вĕçевре хуçăлнă çунат» статья «Курăнман уйăхăн» куçа кантаракан çути» ярăма уçать. Ăна Федор Павлова халалланă. Вăл чăваш музыка культурин чăн пирвайхи классикĕсенчен пĕри, илемлĕ çырулăхра та тарăн йĕр çеç мар, вилĕмсĕр хайлавсем хăварнă.

Ун çÿллĕ çут çамки ăспа
çиçетчĕ,
Вылятчĕ шÿт ун типĕ
куçĕнче, –

çапла çырнă хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай Илле Тăхти пирки. Çĕнĕ кĕнекере «Колчак» поэма авторĕ пирки икĕ статья пичетленнĕ.

Петĕр Хусанкай тĕнчин сукмакĕсене йĕрлесе Юрий Артемьев вун-вун ĕç çырнă. Çак кăларăма вĕсенчен виççĕшĕ – «Чĕрепе суйланă сăвăсем», «Шанатăп хамăн çăлтăра» тата «Ман тĕлтен çанталăк çурма çутă» – кĕнĕ.

Чăвашсен паллă çыравçин Хветĕр Уярăн сасси тăван литературăра иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче илтĕнме пуçланă. Вăл чи тиркевлĕ ăстасенчен пĕри, стилист. «Çав ăсталăх палли, – тет Юрий Артемьев «Сăмах мехелĕ» статьяра, – хăйĕнчен хăй нумайрах ыйтни, пĕртен-пĕр вырăнлă сăмаха шыраса асапланни, канăçсăрланни-иккĕленни...»

Çиччĕмĕш çăлтăр – Юрий Скворцов. Ун пирки кĕнекере «Йыхăрсан инçете кĕрен парăс», «Сĕткенпе тулнă кĕрхи çимĕç», «Шăпа карчĕсем» статьясенче çырса кăтартнă.



Иккĕленÿ çук: çĕнĕ кĕнекене кĕртнĕ тĕпчев-шухăшлав ĕçĕсемпе вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекенсем çеç мар, вĕрентекенсемпе ăслăлăх ĕçченĕсем те туллин усă курма пултарĕç.

Паян Чăваш наци библиотекинче Ю.Артемьевăн «Чăн тÿпере çич çăлтăр» кĕнекин презентацийĕ пулать, 14 сехетре пуçланать.

■ **Надежда СМИРНОВА**

● *Шÿтлесе те чăнласа*

Вуламанни кулянтарать

Эпĕ – илемлĕ литература кĕнеки. Манăн та хаçатра шухăша уçса парас килет. Кĕнеке вăл çын пекех: пурăнать, ĕçлет, ватăлать... Анчах çынсемпе танлаштарсан уйрăмлăхĕ те пур. Ача амăшĕн варĕнче тĕвĕленнĕ хыççăн тăхăр уйăхран çут тĕнчене килет, аталанать, çын пулать, хăйĕн ĕмĕрне пурăнать. Пирĕн, кĕнекесен, кун-çул урăхларах – пиççе çитиччен чылай çул та иртет. Шăпи тĕрлĕрен килсе тухать: пĕрисем пичетленсе тухнă-тухман çынсене кирлĕ маррипе çухалаççĕ, теприсем çĕр-çĕр çул пурăнаççĕ, тĕнче историне кĕрсе юлаççĕ.

Мана çут тĕнчене кăларма шут тытнă Микулай пуçĕнче эпĕ çулталăкĕпех тĕвĕлентĕм. Вăл кĕнеке çырма пуçличчен мĕн чухлĕ вуламарĕ, ăçта кăна çитмерĕ, мĕн чухлĕ çынпа курса калаçмарĕ пулĕ! Архивсенче те эрни-эрнипе чакаланса ларчĕ. Çырма тытăнсан та кăлтăк чылай пулчĕ. Çапах икĕ çултан ĕçне вĕçлерĕ-вĕçлерех. Унтан çĕнĕ кĕнекене тумлантарса халăх патне кăлариччен самай нушаланчĕ: е укçи-тенкине тупса çитерейместь, е издательствăра черет çитмест...

Нушапа çут тĕнчене килнĕ хыççăн мана икĕ çул каялла вулавăшри чаплă çÿлĕк çине хучĕç. Манăн ĕç – çынсемпе тĕл пулмалла, вĕсемпе калаçмалла, чун-чĕрере мĕн пуррине каласа памалла, ăс пухма пулăшмалла. Автор эпĕ пысăк хастарлăхпа ĕçе тытăнасса шаннăччĕ. Анчах кĕтнĕ пек ăнăçлах пымасть-ха. Пĕрисем тытса пăхаççĕ те, хуплашки килĕшмест-ши, илсе вулама васкамаççĕ. Тепри: «Ку кĕнекене пуян чăваш писатель пулас тĕллевпе çеç çыркаласа кăларнă пулĕ-ха», – тесе урăххисене шырама пуçларĕ. Паллашма кăмăл тăвакансем тупăнкаларĕç-ха, анчах хальлĕхе савăнмалли çук.

Акă вун пĕрмĕш класра вĕренекен Вова Петров мана килне илсе кайрĕ те эпир унпа вунă кун ытла чунран калаçрăмăр. Савăнтарчĕ çак çамрăк. Манăн страницăсенчи ăслă шухăшсене тетрачĕ çине çырса-çырса илчĕ, пурнăçра кирлĕ пулать терĕ. Институтра вĕренекен юлташĕ, экзаменсем хыççăн киле таврăннă Сергей, Вова мĕн вуланипе кăсăкланчĕ. Вова пысăк хак панине кура мана унранах илсе вуласа тухрĕ, кăмăллă юлчĕ.

Вулакансенчен пĕри те хурламарĕ-ха мана. Çапах савăнмаллинчен ытларах кулянма тивет: икĕ çулта мана библиотекăран илсе каякан сахал пулчĕ. Автор та пăшăрханать. Вулавăшра уйăхĕ-уйăхĕпе çулĕк çинче «ĕçлемесĕр» выртакан кĕнекесем йĕркипех. Нумай пулмасть пирĕн çÿлĕк çинченех чылай кĕнекене кивĕ хута ăсатрĕç: ватăлнă, усси сахал терĕç. Мана та çак шăпа çитмĕ-ши?

Кунта ялан «хуралта» тăнă май çакна асăрхатăп: вулавăша ытларах вĕренекен çамрăксемпе пенсионерсем çÿреççĕ. Районти тĕрлĕ организаци-учреждение ĕçлекенсенчен нумайăшĕ кĕнеке çурчĕ ăçта вырнаçнине çырса çапнă тăрăх çеç пĕлетмĕн. «Кĕнеке – пĕлÿ çăл куçĕ» тенĕ каларăш чиновниксемпе ытти специалистшăн кивелчĕ-ши? Телевизорпа сериалсем пăхнипех ăс-хакăлпа культура шайĕ ÿсес çуккине ăнланмаççĕ-ши?

■ **Ревокат МОИСЕЕВ.**
Комсомольски районĕ

«Хыпар» хаçат редакцийĕ Ревокат Прохорович Моисеева 89 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлать, хальхи пекех сатур пулма сывлăх, телей, иксĕлми пултарулăх сунать.

Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ

● Лавр çулçи хăватлă.
● Суперсĕлĕ вăй хушать.
● Кедр йĕкелĕн шывне ĕçсе.
● Шăнса пăсăлсан пулăшакан шĕвек.
● Ваннăна – крахмал.
● Подагрăпа циститран.
● Уртăш – сывлăхшăн чăнчăн парне.
● Самăрлăхран хăтăлма пулать-и?
● Тасалăх – сывлăхшăн пĕлтерĕшлĕ.
● Кунне – пĕр ывăç майăр.
● Мĕнле сĕткен лайăхрах?
● Хатха-йогăна пăхăнса.
● Сыпăсен пиçĕлĕхне тавăраççĕ.
● Пăтă пирки тĕплĕнрех.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерÿ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

Саламлатпăр

Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕнче пурăнакан инкене – Антонина Гурьевна ЗАЙЦЕВĂНА – 70 çулхи юбилейпе ăшăн саламласа вăрăм кун-çул, çирĕп сывлăх, çемьере – килĕшÿпе татулăх, тулăх пурнăç сунатпăр. Тăванăмăр, яланах хавaслă та ырă, чунупа çамрăк пул, пурнăçри кашни куну ырлăхпа тултăр.

Сума суса – Зайцевсен, Скворцовсен, Красновсен çемйисем.

Конкурсный управляющий ИП Васильевой Н.И. (ИНН 212401191171, ОГРН 304212423200054) (далее должник) Николаев Н.И. извещает о реализации имущества, принадлежащего должнику, по прямым договорам, в течении 10-ти дней с даты опубликования настоящего сообщения.
Предмет продажи:
1.Земельный участок (земли поселений), 0,15 га, находится примерно в 675 м по направлению на юго-запад от ориентира ОМЗ-95, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Атлашевское сельское поселение, д.Кодеркасы. Кадастровый (или условный) номер объекта: 21:21:06 52 01:0003 – 30000 руб.
2. Шкаф коричневого цвета – 8000 руб.
3. Столик туалетный светло-коричневого цвета – 2500 руб.
4. Прикроватная тумбочка светло-коричневого цвета – 500 руб.
Справки по тел. 89196639612.

ПРОДАЮ

10.Песок, гравий, камни банные, керамблоки, торф. Т. 8-917-066-40-19.

25.Гравмассу, керамблок, песок, кирпич силикатный, **торф.** Доставка. Т. 89023277585.

59.Грабли, сажалки, окучники, опрыскиватели, плуги – все новые. Т. /8352/ 406765, 89176627409.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ нарăсăн 19-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун”– 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
28-85-87 – яваплă секретарь çумĕ
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21, 56-22-31, 28-83-67 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91, 28-85-33 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем, 56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-32/ 6-11-82 – Патăрьел
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почти:
pop408@rambler.ru
hypar@chtts.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел.: 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ятсум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă”** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8143. Заказ 476.